27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
МАРТ
28
ЫТЛАРИКУН
62 (6557) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем, çав тери хăвăрт наступлени туса пырса, темиçе кун каярах 175 километр фронт сарлакăшпе **Днестр** шывĕ урлă каçнă та **Бельцы** хулипе паха чугун çул узелне туртса илнĕ, унтан наступление малалла вăйлатса ярса хамăр государство чиккине — **Прут** шывĕ çине — 85 километр фронт сарлакăшпе тухнă.

Днестр шывĕ урлă каçассишĕн, **Бельцы** хулипе чугун çул узелне туртса илессишĕн тата государство чиккине тухассишĕн пынă çапăçусенче **Коротеев** генерал-лейтенантăн, **Трофименко** генерал-лейтенантăн, **Жмаченко** генерал-лейтенантăн, **Манагаров** генерал-лейтенантăн, **Галанин** генерал-лейтенантăн çарĕсем, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн **Богдановăн**, бронетанковăй çарсен Маршалĕн **Ротмистровăн**, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн **Кравченкăн** танкисчĕсем, артиллери генерал-лейтенанчĕн **Фоминăн** артиллерисчĕсем, авиаци генерал-полковникĕн **Горюновăн** летчикĕсем, **Глезер** полковникăн, **Понимаш** полковникăн, **Малов** полковникăн, **Петров** полковникăн саперĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе **Днестр** шывĕ урлă каçнă чух, **Бельцы** хулине туртса илнĕ чух тата государство чиккине тухнă чух уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене **„Днестровски“** тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 26-мĕшĕнче, 21 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици **Мускав**, виççĕрçирĕм тăвата тупăпа çирĕм тăвата хут пĕр харăс персе, **Днестр** шывĕ урлă каçса хамăрăн государство чиккине тухнă **Украинăри** 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, **Днестр** шывĕ урлă каçассишĕн, **Бельцы** хулине туртса илессишĕн тата государство чиккине тухассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, **тав тăватăп.**

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав.

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ ***И. СТАЛИН.***

1944 çулхи мартăн 26-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне ЖУКОВА

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, ĕнер, мартăн 26-мĕшĕнче, танковăй соединенисем тата пехота хăвăрттăн пырса çапнипе, Украинăн область центрне — **КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСК** хулине — нимĕçсен **ДНЕСТР** çинчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пунктне туртса илнĕ.

КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСК хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче **ЛЕЛЮШЕНКО** генерал-лейтенантăн çарĕсем, танковăй çарсен генерал-майорĕн **БЕЛОВĂН**, **АКИМОВ** генерал-лейтенантăн, **СМИРНОВ** полковникăн, **ЖУКОВ** полковникăн, **ДЕНИСОВ** полковникăн, **ФОМИЧЕВ** полковникăн, **МЕДВЕДЕВ** полковникăн, **ТУРКИН** полковникăн, **РЫВЖ** полковникăн танкисчĕсем, **РУБАСОВ** полковникăн артиллерисчĕсем, авиаци генерал-майорĕн **ГОЛОВНЯН**, авиаци генерал-майорĕн **КАМАНИНĂН**, **КОТЕЛЬНИКОВ** полковникăн, **НЕЧИПОРЕНКО** полковникăн летчикĕсем тата инженернăй çарсен генерал-майорĕн **БЛАГОСЛАВОВĂН**, **ЕПИФАНОВ** полковникăн саперĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве палăртса хăварас майпа **КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСК** хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене **«КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСКИ»** ятсем пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 27-мĕшĕнче, 21 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици **МУСКАВ**, виçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Украинăри 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, **КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСК** хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, **КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСК** хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, **ТАВ ТĂВАТĂП.**

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ ***И. СТАЛИН.***

1944 çулхи мартăн 27-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 26-мĕшĕнче **УКРАИНĂРИ** 1-мĕш фронт çарĕсем, наступление çаплах вăйлатса пырса, Каменец-Подольск облаçĕнчи **МИХАЛПОЛЬ** район центрне, Винница облаçĕнчи **БАР** район центрне, Тарнополь облаçĕнчи **КОЗЛОВ** тата **ЗОЛОТНИКИ** район центрĕсене туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — **РОСОХОВАТЕЦ, КОТУЗОВ, ГНИЛОВОДЫ, ВИШНЕВЧИК, КУПИН, МАЛАЯ КАРАБЧЕЕВКА, САВВИНЦЫ, ШУМОВЦЫ, ЗАГИНЦЫ, КОРЖОВЦЫ, БОЖИКОВЦЫ, ЖЕНИШКОВЦЫ, ИОЛТУХИ, ЗАМЕХОВ, СТРУГА** ятлă пысăк ялсем тата **КОРЖОВЦЫ, БОГДАНОВЦЫ** ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем тăшманăн **ТАРНОПОЛЬ** хулинчи тата **КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСК** хулинчи гарнизонĕсене çавăрса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем çав тери хăвăрт наступлени туса пырса, темиçе кун каярах 175 километр сарлакĕш участокра **ДНЕСТР** шывĕ урлă каçнă та **БЕЛЬЦЫ** хулипе паха чугун çул узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тăшманпа çапăçса Молдаван ССР-ĕн район центрĕсене **ФАЛЕШТЫ** хулине тата **ГЛОДЯНЫПА, БОЛОТИНА** ялĕсене йышăннă, унтан наступление малалла вăйлатса ярса, 85 километр сарлакĕш участокра хамăр государство чикки патне, **ПРУТ** шывĕ çине пырса тухнă.

ПЕРВОМАЙСК хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса çаплах малалла тапăнса пынă, темиçе ял туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 44 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 18 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Пирĕн çарсем Тарнополь хулинчен çурçĕртерехре Серет шывĕ урлă каçнă та Тарнополь хулинчен кăнтăр енĕпе иртсе кайнă хамăр чăссемпе пĕрлешнĕ. Çапла вара нимĕçсен Тарнополь хулинчи группировкине çавăрса илнĕ. Тăшмана пур енчен те хĕссе пырса, совет боецĕсем нимĕçсен Тарнополь патĕнчи çÿллĕ вырăнсем çинче туса тултарнă артиллерипе миномётсен позицийĕсене тылран атакăланă. Хаяр çапăçура нимĕçсен артиллери тата миномет подразделенийĕсене аркатса тăкнă. Совет çарĕсем нимĕçсен Тарнополь хулинчи гарнизонне пĕтерсе пыраççĕ, урам хыççăн урам тасатса пыраççĕ. Нимĕçсен çавăрса илнĕ группировкине пĕтерессишĕн çапăçнă вăхăтрах пирĕн çарсем çапăçса хĕвеланăçнелле куçса пынă, Тарнополь облаçĕнчи Козлов ятлă район центрне туртса илнĕ. Паян тăшман танкĕсемпе пехоти Озерны районĕнчен пырса Тарнополь хулинчи гарнизонне пулăшма хĕсĕнсе кĕме хăтланнă. Çурçĕр енчен тата кăнтăр енчен пыра-пыра çапса, пирĕннисем нимĕçсене хĕскĕчпе хĕстерсе артнă, çапăçу хирĕнче нимĕçсен 20 танкĕ ытла тăрса юлнă тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе çĕр виллиыртса юлнă. Тăшманăн çав ушкăнĕн юлашкийĕсем хăраса ÿксе тарса пĕтнĕ.

Пирĕн çарсем нимĕçсен Каменец-Подольск хулинчи гарнизонне йышлă вăйсемпе çавăрса илнĕ, Каменец-Подольск хулипе Черновицы хули хушшинчи шоссе çулне татнă. Нимĕçсене çурçĕр енчен, хĕвелтухăçĕнчен, хĕвеланăçĕнчен тата кăнтăр енчен штурмласа, совет чăсĕсем Каменец-Подольск хули урамĕсенче ăнăçлăн çапăçаççĕ, тăшмана питĕ пысăк çухатусем кÿреççĕ. Пĕр соединенин танковăй чăсĕсем пилĕк кун хушшинчи çапăçусенче 8.000 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 1.500 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Танкистсем нимĕçсенчен 92 тупă, 2.000 автомашинăна яхăн, 1.140 лав, 1.280 лаша тата тĕрлĕрен 30 склад тытса илнĕ.

Ĕнер Проскуров хулине туртса илнĕ совет чăсĕсем 95 танк, тĕрлĕ калибрлă 52 тупă, 320 автомашина, 70 тракторпа тягач, 10 бронетранспортер, 3 эшелон апат-çимĕç, 50 вагон çĕркăмрăк, 60 вагон çар хатĕрĕсем, 11 боеприпас складĕ, 4 горючи складĕ, 8 апат-çимĕç складĕ, 3 çыхăну пурлăх складĕ тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени чăсĕсем тăшманăн Бельцы хулинчи гарнизонне çавăрса илнĕ. Нимĕçсем, читлĕхрен тухма хăтланса, юлашки чун хавалĕпе çапăçнă, питĕ пысăк çухатусем тÿснĕ, анчах та тухайман. Паян совет танкисчĕсемпе пехота, хулана вăркăнса кĕрсе кайса, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă. Нимĕçсен нумай подразделенийĕсем алăри хĕçпăшала пăрахса тыткăна парăннă. Пирĕн Бельцы хулипе паха чугун çул узелне туртса илнĕ çарсем трофейăсем нумай тытса илнĕ.

Ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, тăшмана çĕмĕрсе пырса, Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем Молдаван ССР-ĕн район центрĕсене — Фалешты хулине тата Глодяныпа Болотина ялĕсене тытса илнĕ. Совет çарĕсем сарлака фронтпа хамăрăн государство чиккине — Прут шывĕ çине — тухнă. Прут шывĕ урлă каçса тарма ĕлкĕреймен тăшманăн нумай групписене пĕтерсе тăкнă, 500 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ. Прут шывĕ хĕрринче тăшманăн вăрçă техникине тата автомашинăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Первомайск хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чăсĕсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, темиçе ял туртса илнĕ. Хăй тĕллĕн çÿрекен 7 тупă тата çар пурлăхĕ турттарса пыракан пысăк обоза тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн çăмăллăн куçса çÿрекен отрядсем тăшман тылне татса кĕрсе кайнă та нимĕçсен каялла чакакан колоннине сасартăк пырса çапнă. Совет боецĕсем 700 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, 9 тупă, 60 автомашина тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Николаев хули енче пирĕн çарсем çаплах тăшманпа çапăçнă. Николаев хули патне пымалли вырăнсенче нимĕçсем лайăх рубежсем йышăнса тăраççĕ. Çурçĕр енчен хулана Ингул шывĕ, кăнтăр енчен Кăнтăр Буг шывĕ хÿтĕлеççĕ. Çав шывсем хушшинчи 3 километр тăршшĕ лаптăка нимĕçсем вăйлă çирĕплетнĕ, темĕн чухлĕ тупă тата персе тăмалли урăх хатĕрсем те питĕ нумай лартса тултарнă. Пирĕн чăссем, штурмлакан пĕчĕк ушкăнсене пайланса çапăçса, пĕр вăйлă çирĕплетнĕ тăрăха туртса илнĕ. Çав çапăçура 800 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. 7 тупă, 21 миномет, 30 пулемет, 20 автомашина, 6 склад авиабомба, 5 склад çар пурлăхĕ тытса илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ тăшманăн хуралта çÿрекен икĕ карапне шыва путарнă, икĕ тральщикне сиенленĕ.

* * *

Калинин облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ уйăх хушшинче нимĕçсен 26 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. 23 паровозпа 140 вагон çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ е сиенленнĕ. Унсăр пуçне тата 5 чугун çул кĕперне, 1.500 рельса сирпĕнтерсе янă. Совет патриочĕсем шоссе çулĕсемпе ахаль çулсем çинче 2 бронемашина, 90 автомашина тата 40 лав пĕтерсе тăкнă. Партизансем пĕр радиостанци, 20 пулемет, 150 автоматпа винтовка, боеприпассем тиенĕ 17 лав тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Çав çапăçусенче партизансем гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă.

Хĕрлĕ Çар хамăрăн государство чиккине тухнă ятпа

Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем çинчен кунран кун савăнăçлă хыпарсем килеççĕ. Мартăн 26-мĕшĕнче радио Украинăри 2-мĕш фронтăн çарĕсем государство чиккине тухни çинчен пĕлтерчĕ. Ку хыпар пĕтĕм совет ĕççыннисене фронта пулăшассишĕн татах та хастарлăнрах ĕçлеме çĕклет.

Ĕнер Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри пур цехсенче те митингсем пулса иртрĕç. Завод коллективĕ, Хĕрлĕ Çара тав туса, çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн кĕрешĕве тухрĕ. Завод коллективĕ апрель уйăхĕнчи производство планне 25 кун хушшинче, ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем тумалли плана 28 кун хушшинче тултарма пулчĕ. Апрель уйăхĕнче çамрăксен бригадисене çĕнĕрен 15 организацилеме тата стахановла шкулсем уçма палăртнă. Рабочисен квалификацине ÿстерес, производство ĕçне механизацилес тата ытти чылай ĕçсем енĕпе пысăк мероприятисем пурнăçа кĕртме йышăннă.

Завод коллективĕ хăй çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртсе çитерессишĕн пĕтĕм вăй-хăватпа кĕрешме тытăнчĕ.

А. СМИРНОВА.

Хĕрлĕ Çар ССР Союзĕн государство чиккине тухрĕ!

1944 çулхи мартăн 26-мĕшĕ совет халăхĕн Отечественнăй Аслă Вăрçин геройла летописне уйрăмах çутă кун пулса кĕрсе юлать. Çав кун 324 тупă, пĕр харăс персе, Украинăри 2-мĕш фронтăн чаплă çĕнтерÿ тунă паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют пачĕ. Çав кун Верховнăй Главнокомандующин Сталин юлташăн хаваслă та чаплă событи çинчен—Хĕрлĕ Çар ССР Союзĕн государство чиккине — Прут шывĕ çине тухни çинчен калакан приказне пĕтĕм çĕршыв хавхаланса итлерĕ.

Хĕрлĕ Çар хăйĕн тĕрĕс задачине ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать. Вăл совет çĕрне фашистла нимĕç захватчикĕсенчен тасатать. Совет çĕрĕ çинче алла хĕçпăшал тытнă пĕр тăшман та юлман кун çывхарса килет.

Пирĕн шухăш пирĕн государство чиккине тăшман кĕтмен çĕртен, ултавлăн пăсса аслă Тăван çĕршыва çĕмĕрсе кĕнĕ кун патне таврăнать. Тăшман ун чухне хăйĕн пĕтĕм çарне, пĕтĕм техникине çапăçăва кĕртсе ячĕ. Çавăн пек пырса çапнине Европăри урăх нимĕнле государство та тÿссе тăрайман пулĕччĕ. Гитлер çавна ĕмĕтленнĕ те ĕнтĕ: вăл Хĕрлĕ Çара пĕрре пырса çапсах халран яма, совет халăхĕн хирĕç тăрас хăватне хавшатма, ăна хăратса ÿкерме хапсăннă. Фашистла Германипе унăн тарçисем пухса тăратнă вăйсем, хăйсен планĕ тăрăх, çиçĕмле пырса çапмалла пулнă, «çиçĕмле вăрçă» вара Францие, Бельгие, Голландие, Норвегие тата Европăри ытти çĕршывсене çĕнтерсе иртĕхсе кайнă тăшмана çĕнтерÿ кÿмелле пулнă. Анчах нимĕç захватчикĕсем хăйсем çавăн пек каппайчăклăн та сĕмсĕррĕн ăçта кĕрсе кайнине ăнланман. Вĕсем мĕнле халăха, мĕнле çĕршыва вăрă-хурахла пырса çапнине, вĕсене кун та мĕнле таврăну кĕтнине ăнланман.

1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче хăй çарĕсене совет чикки урлă каçма приказ парса, Гитлер Совет Союзĕнчи халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн тата пĕрлĕхĕшĕн вилĕм приговорĕ алă пусатăп тесе шутланă. Тĕрĕссипе çав кун гитлерла Германишĕн вилĕм приговорĕ алă пуснă кун пулчĕ. Çав приговор пурнăçа кĕрсе пырать. Вăл вĕçне çитиччченех пурнăçа кĕрĕ.

Пĕрремĕш кунах, 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнчех, совет пограничникĕсемпе Хĕрлĕ Çарăн малти чăсĕсем геройла хирĕç тăни нимĕçсен çĕнтерÿсем тумалли триумфла расписанине аркатса ячĕ.

Гитлерăн каппайнă «çиçĕмĕ» çиçеймерĕ. Вăрçă Гитлер генералĕсем ĕмĕтленнĕ пек пулса пымарĕ.

Нимĕçсем пирĕн государство чиккине татса кĕме пултарчĕç. Вĕсем пирĕн çĕршыва шала кĕме пултарчĕç. 1942 çулта вĕсем Атăл патне çитрĕç. Каппайнипе суккăрланнăскерсем, вĕсем çавна çитĕнÿ тесе шутларĕç. Анчах вĕсем совет чиккисенчен мĕнчул шаларах кĕчĕç, хăйсен вилĕмĕ патне çавăн чухлĕ ытларах çывхарса пычĕç. Çав вилĕме ăна тăшман валли Сталинăн генийлĕ стратегийĕ тата Хĕрлĕ Çарăн çав тери аслă паттăрлăхĕ хатĕрлесе хучĕ.

Сталинград—фашистла нимĕç çарĕн хĕвелĕ анса ларни, Гитлерăн империалистла вăрă-хурахла банди тунă преступленисемшĕн Германие таврăнмалли кун çитни пулса тăчĕ. Çапăçусенче халран кайнă, поражениçем тÿснипе шикленсе ÿкнĕ, вырăхса çитнĕ Германи çарĕ Сталинград патĕнчен, Кавказ тăвĕсем патĕнчен каялла çаврăнчĕ. Вăл Совет Союзĕн хĕвеланăçĕнчи чиккисем патнелле намăсла каялла поход тума тытăнчĕ.

Нимĕçсем çав çулсенче тытăнса тăма хăтланни кăлăхах пулчĕ. Вĕсем юханшывсем çинче тытăнса юлма хăтланни ахалех пулчĕ. Дон, Днепр, Буг, Днестр — çак совет шывĕсем тăшмана тытăнса тăма тĕрек памарĕç, вĕсем тăван Хĕрлĕ Çара хăйсем урлă кăмăллăн каçара-каçара ячĕç.

Хĕрлĕ Çар 1942—1943 çулхи хĕллехи кампание ăнăçлăн ирттерчĕ, 1943 çулхи çуллахи çапăçусенче çĕнтерчĕ. 1943—44 çулхи хĕллехи çĕнтерÿллĕ наступление анлăн вăйлатса ячĕ. Çулталăк ытла ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар çапăçури пуçарулăха пĕр вĕçертмесĕр хăй аллинче тытса тăрать. Тăшмана çавăра-çавăра илет, çапа-çапа аркатса пĕтерсе тăкать. Кун пеккине тĕнче халиччен курман-ха. Вăрçăсен историйĕнче çакăн пек татти-сыпписĕр наступлени туса пынин тĕслĕхĕ халиччен пулман.

Хĕрлĕ Çар çав тери йывăр условисенче наступлени туса пырса халран каяссине кĕтни гитлеровецсен кăлăхах пулчĕ. Вĕсем сывлăш çавăрма ĕмĕтленнĕ. Анчах вĕсен сывлăш çавăрасси пулмарĕ, вĕсене Хĕрлĕ Çар хăватлăнрах та хăватлăнрах пыра-пыра çапать. Банкрута тухнă авантюристсем хăйсене усăсăр ĕмĕтсемпе лăплантарма ан та шутлаччăр. Вĕсене хăйсен вилĕмĕ çитиччен те сывлăш çавăрмалли пулмасть!

Нимĕç захватчикĕсене хăй умĕнче хăваласа пырса, Хĕрлĕ Çар совет çĕршывĕн хĕвеланăçĕнчи чикки патне таврăнчĕ. Вăтăр виçĕ уйăх каярах нимĕçсем пирĕн çĕршыва çĕмĕрсе кĕчĕç. Вăхăтлăха вĕсен ун чухне вăйĕсем Хĕрлĕ Çарăннинчен пысăкрахчĕ. Германи çарĕ йышлăрахчĕ, мĕншĕн тесен ăна пĕтĕмĕшпех мобилизацилесе çитернĕ пулнă. Нимĕçсен самолетсемпе танксем те йышлăрахчĕ. Вĕсен çарĕсем вăрçăра пулса, кучухнеки вăрçăн опытне туяннă пулнă. Нимĕçсем хăйсем çĕнтерессине шанса тăнă. Вĕсем, гитлерла командованин вăрă-хурахла приказĕсене тарçăлла пурнăçа кĕртсе пырса, Германи çарне «çĕнтерекенни никам та çук» тесе юмаха ĕненсе, малалла тапăнса пынă.

Чикĕ патĕнче малтанхи хут тĕл пулнă чухне Хĕрлĕ Çар хăйĕн тăшманĕнчен вăйсăртарах пулнă. Хĕрлĕ Çар хăй вĕçĕ-хĕррисĕр паттăр пулнипе, хăйĕн ĕçĕ тĕрĕс те таса пулнине ăнланса илнипе, Тăван çĕршыва хÿтĕлесе çĕре хăйĕн мĕнпур вăйĕсене пама хатĕр тăнипе кăна тăшман çарĕнчен вăйлăрах пулнă. Хĕрлĕ Çарăн вăйĕ — унпа пĕрле пĕтĕм совет халăхĕ кĕрешĕве çĕкленнинче, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе хăйĕн социализмлă хуçалăхĕн пĕтĕм хăватне урă çине тăратма хатĕр тăнинче пулчĕ.

Сталин юлташ совет çыннисене çапла вĕрентет: тăшман вăхăтлăха кăна вăйлă, çав вăй часах пĕтсе ларать, çĕнтерÿ тума кирлĕ яланлăх факторĕсем—совет халăхĕн аллинче. Фронта хĕçпăшалсемпе боеприпассем, апат-çимĕçсем парса тăрас тесе, пĕтĕм вăя хурса ĕçлени, хĕçпăшала тата вăрçă ăсталăхне тĕплĕн вĕренсе алла илни кăна кирлĕ.

Тăшманпа чикĕре халĕ тĕл пулнă чухне ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар малтанхи çар мар, нимĕçсемпе вĕсен тарçисем те ĕнтĕ малтанхисем мар. Ĕç Сталин юлташ малтанах курса тăрса калани пекех пулчĕ: Хĕрлĕ Çар ытларах та ытларах хăватланса пиçĕхсе пычĕ. Гитлерăн çарĕ вăйсăрланнăçемĕн вăйсăрланса пычĕ.

Нимĕçсем Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе совет чикки урлă каçа-каçа тараççĕ, вăрăм çул çинче хăйсен суйласа илнĕ чи лайăх дивизийĕсене çухатса хăвараççĕ. Прутпа Атăл шывĕсем хушшинчи çулсем Гитлерăн çапса аркатнă техникипе тата нимĕçсен миллионшар виллисемпе витĕннĕ. Нимĕçсем Атăл çинче хăйсем çĕнтерес шанчăка çухатрĕç. Прут шывĕ çинче вĕсем хăйсем çăлăнса юлас шанчăка çухатаççĕ. Нимĕçсен стратегийĕ, вĕсен вăрă-хурахла политики пекех, путланса ларчĕ.

«Хальхи вăрçăра Германи хăйĕн тĕп вăйĕсемпе пĕр фронтра — ССР Союзне хирĕç çапăçать. Апла пулсан та, вăл çĕнтерме пултараймарĕ кăна мар, Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем хăватлăн пыра-пыра çапнипе пĕтсе ларасси патне пырса тăчĕ. Совет Союзĕ пĕччен тăрса çапăçса, Германин вăрçă машини хĕснине тÿссе ирттерчĕ кăна мар, нимĕçсен фашистла çарĕсене татăклă поражени те тÿстерчĕ пулсан, пирĕн союзниксен тĕп вăйĕсем çапăçăва кĕнĕ хыççăн тата гитлерла Германие хирĕç мĕнпур союзлă государствăсен çарĕсем хăватлăн та ÿссех пыракан наступлени пуçласа янă хыççăн вара, гитлерла Германин лару-тăрăвĕ татах та ытларах шанчăксăрланĕ». (И. Сталин).

Нимĕçсемпе вĕсен тарçисем хăйсем малтан тапăнса кĕнĕ вырăнсенче тытăнса юлма кăлăхах хăтланаççĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсене юхан шывсем те сăрт-тусем те пулăшаймĕç. Вĕсене пур çĕрте те таврăну пырса çитĕ. Румыни спекулянчĕсем, нумаях пулмасть орудисем хăйсенчен инçетре — Атăл çинче кĕмсĕртетнишĕн савăнаканскерсем, халĕ ĕнтĕ совет артиллерийĕн музыкине хăйсен хăлхисемпех илтеççĕ.

Пирĕн государство чиккин малтанхи 85 километрне Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларчĕ, — ку вăл историре питĕ пысăк вырăн йышăнса тăракан событи! Баренц тинĕсĕнчен пуçласа Хура тинĕс патне çитиччен — мĕнпур совет чиккине нимĕçсенчен тасатса çитерессишĕн халĕ нумай вăй хурса кĕрешмелле пулать-ха. Тăшман пирĕн çĕрĕн пĕр метрне те хăйĕн ирĕкĕпе тасатас çуккине эпир пĕлетпĕр. Ăна çапа-çапа кăлармалла.

Хĕрлĕ Çар ССР Союзĕн государство чиккине тухни çинчен калакан хыпар пирĕн хуласемпе ялсем тăрăх çиçĕм пек сарăлчĕ. Нумай çĕрте митингсемпе калаçусем пулса иртрĕç, вĕсенче Совет Союзĕнчи ĕççыннисем паттăр Хĕрлĕ Çарăн геройла ĕçĕсенчен тĕлĕнсе савăннине палăртаççĕ.

Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автозаводăн цехĕсенчен пĕринче пулнă митингра стахановка Тарасова юлташ çапла каланă: «Государство чиккине тухнă тата гитлерла захватчиксене хирĕç пыракан кĕрешÿре аслă çĕнтерÿ тунă Хĕрлĕ Çара тав туса, манăн бригада стахановла вахтăна тăрать, производство планне кашни кун ирттерсе тултарма пулать», тенĕ.

Хĕрлĕ Çарăн историллĕ çĕнтерĕвĕсем фашистла нимĕç захватчикĕсене пĕтĕмпех çĕнтерес çутă куна çывхартассишĕн совет тылĕнчи ĕççыннисене паттăрла çĕнĕ ĕçсем тума хавхалантараççĕ.

Хамăрăн çĕнтерÿллĕ Хĕрлĕ Çара — мухтав!

(«Правда», мартăн 27-мĕшĕнчи умстатьяран)

Совет Союзĕ тăрăх

Ленинграда хупăрласа тăнă нимĕçсемпе финсем халăх пурăнакан çуртйĕрсене, культура памятникĕсене тата хулари мирлĕ халăха нумай пĕтернĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Сестра-воспитательница С. Ф. Желватых больницăна илсе пынă виçĕ уйăхри Лариса Бютнера йăпатать, юратса пăхса ӳстерет. Ларисăн амăшне снаряд ванчăкĕ тивсе вĕлернĕ, кăкăр ачи алă пӳрнисене татса кайнă.

В. ФЕДОСЕЕВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники)

РСФСР-ти Педагогика наукисен академийĕ

Мускавра РСФСР-ти Педагогика наукисен академийĕ уçăлать. Унта наукăпа тĕпчев институчĕсем 4 институт пĕрлешнĕ: педагогикăн историйĕпе теорийĕн институчĕ, вĕренӳ меточĕсен институчĕ, психологи институчĕ тата дефектологи институчĕ. Академие РСФСР Наркомпросĕн çутĕç библиотекипе, çутĕç музейне тата «Советская педагогика» журналне парасçĕ.

Академин составне çирĕплетнĕ, унта 14 действительнăй член тата 13 член-корреспондент Академин действительнăй членĕсем хушшинче çаксем пур: РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕ академик В. П. Потемкин (вăл—Академи президенчĕ), Н. С. Державин, А. Н. Толстой, Л. В. Щерба академиксем, писатель П. Г. Тычина, профессор И. А. Каиров (вăл—вице-президент).

Кăçал Академин аспирантурине 30 çын, докторантурине 20 çын илеççĕ. (ТАСС).

Аслă шкулсемпе техникумсене вĕренме кĕмелли правилăсем

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Аслă шкул ĕçĕсен Комитечĕ вузсемпе техникумсене вĕренме кĕмелли правилăсене çирĕплетнĕ. 1944 çултан пуçласа çав шкулсене вĕренме кĕрес текенсен экзамен тытас пулать. Экзаменсăр çаксене кăна илеççе: аслă шкулсене вăтам шкултан отличник аттестачĕ илсе вĕренсе тухнисене, техникумсене—çичĕ çул вĕренмелли шкултан отличник аттестачĕ илсе вĕренсе тухнисене, вĕсене те вĕренсе тухнăранпа икĕ çул иртмен пулсан кăна экзаменсăр илеççĕ.

Аслă шкула кĕмелли заявленисене июнĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 31-мĕшĕччен йышăнаççĕ. техникума кĕмелли заявленисене июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Вĕренме кĕмелли экзаменсем çак вăхăтра пулса иртеççĕ: аслă шкулсенче—сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшне çитиччен, техникумсенче—августăн 21-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшне çитиччен. (ТАСС).

Шкул ачисен çуркуннехи каникулĕ

Мартăн 27-мĕшĕнче шкул ачисен çуркуннехи каникулĕ пуçланчĕ. Каникул апрелĕн 1-мĕшĕччен пырать. Каникул кунĕсенче шкул ачисене театра, кинона тата музейсене илсе каяççĕ. Мускав хулинчи пионер çурчĕсенче шахмат тата шашка турнирĕсем, пултарулăх каçĕсем, концертсем пулса иртмелле.

Шкул пуçлăхĕсемпе учительсем каникул кунĕсене вĕренӳ çулĕн чи ответлă тапхăрне—çуркуннехи экзамена хатĕрленсе ирттереççĕ. Мускавра кашни районрах çав ыйтупа учительсен конференцийĕсем пулса иртеççĕ. (ТАСС)

Криворожье руда пама пуçланă

Криворожье горнякĕсем хăйсен тăван хулипе шахтисене юсаса ĕçе яраççĕ. Кĕске вăхăтрах вĕсем электростанцие, ту ĕçĕ валли оборудовани тăвакан заведа, водопроводăн пĕрремĕш черетри пайне юсаса ĕçе янă. Хулара пекарньăсем, магазинсем, столовăйсем уçнă

Криворожье бассейнĕнче оккупацин результачĕсене часрах пĕтерес тĕлĕшпе ăмăрту саралса пырать. Рудниксене юсаса ĕçе яраççĕ. Приднепровьепе Донбасри заводсем Криворожье бассейнĕнчен 30.000 тоннăна яхăн руда илнĕ ĕнтĕ. (ТАСС).

Çуракине большевикла хатĕрленер!

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем ТРАКТОРСЕМ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА 1944 ÇУЛХИ МАРТĂН 25-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПУРНĂÇА КĔРТНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

МТС-сем	Пурĕ юсанă (процентпа)	Март уйăхĕнчи плана тултарнă (процентпа)
Элĕк	100,0	25,0
Вăрнар	100,0	40,0
Йĕпреç	100,0	—
Ишлей	100,0	—
Комсомольски	100,0	—
Красноармейски	100,0	—
Шупашкар	100,0	—
Шăхасан	100,0	—
Елчĕк	100,0	—
Куславкка	100,0	27,2
Сĕнтĕрвăрри	100,0	200,0
Первомайски	100,0	166,6
Сĕнтĕр	100,0	77,7
Вăрмар	100,0	125,0
Чкаловски	100,0	36,3
Çĕмĕрле	92,3	100,0
Çĕрпӳ	91,5	72,7
Канаш	89,3	55,5
Шăмăршă	88,2	57,1
Етĕрне	87,1	75,0
Хĕрлĕ Чутай	86,9	200,0
Тăвай	78,5	114,2
Кувакино	76,5	55,0
Улатăр	65,1	35,1
Пăрачкав	52,3	17,6
ЧАССР тăрăх	89,5	44,8
Мартăн 20-мĕшĕ тĕлне пулнă	88,1	37,5

Çуракине хатĕр

ОКТЯБРЬСКОЕ. Карабаш ялсоветĕнчи «Волгарь» колхоз çуракине тухма хатĕрленсе çитрĕ. Вăрлăхсем çителĕклĕ. Вĕсене лайăх сортласа хунă. Агротехника ĕçĕсене те вăл кирлĕ пек туса пычĕ. Уя 1.600 лав тислĕк кăларнă. Колхозра агрокружок организациленĕ. Унта 46 çын вĕренет. Çавăн пекех «Восход», Чапаев тата Молотов ячĕсемпе тăракан колхозсем те кăçалхи çуракине тимлĕн хатĕрленчĕç. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз çуракинче ĕçлемелли лашасене вăйлă апат çине куçарчĕ. Уя тислĕк кăларасси те аван пырать, пурĕ 5.675 лав тăкнă. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз «Трудовик» колхоза 8 гектар акмалăх çуртырри вăрлăхĕ парса пулăшрĕ.

А. ХАТАЕВСКИЙ.

Лашасем пăхас ĕçри тимсĕрлĕхе пĕтермелле

СОВЕТСКОЕ. Районри чылай колхозсенче — Чемейри «Сеятель», «Труд» тата «Новая победа» колхозсенче лашасем самăр. Çавна пула çак колхозсем черетлĕ ĕçсене вăхăтра туса пыраççĕ.

Анчах Энгельс ячĕпе тăракан колхозра лашасене чунсăррăн пăхаççĕ. Кунта кĕске вăхăтра 8 лаша вилнĕ. 1943 çулта 14 кĕсререн пĕр тиха та илмен. «Новый быт» колхозра та лашасемпе тĕрĕс усă курмаççĕ, 9 лашана юрăхсăра кăларнă.

Çак колхозсенче лашасем пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçре тимсĕрлĕхе халĕ те пĕтермен. Çураки сывăх. Çавăнпа та лашасене пăхас ĕçре халех çирĕп йĕрке тумалла

Н. ПАХОМОВ.

Колхозниксем колхозсене вăрлăх параççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр., телефонпа). «Трудовик» колхоз членĕсем «Красная Чувашия» колхоза хăйсен запасĕнчен пурĕ 30 пăт тыра пухса панă. Çавăн пекех «Янмурзино» колхоз «Большевик» колхоза 150 пăт тырă кивçен панă. «Орден Ленина» колхоз «Унгастрой» колхоза 210 пăт панă.

Халĕ районри колхозсенче çуракине мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслесси пырать. Çак тĕрĕслӳ çуракине уйрăмăнах «Валасар» колхоз ытла та япăх хатĕрленнине кăтартрĕ. Кунта акмалли вăрлăхсем таса мар, вĕсен шăтаслăхĕ те çителĕксĕр. Çавăн пекех «14 лет Октября», «Коммунист» колхозсенче те вăрлăхсене кирлĕ пек тасатман. Уйрăм колхозсен вăрлăхлăх çĕрулми çитмест. Сăмахран, «Большевик» колхозăн 200 центнер, «Коминтерн» колхозăн 136 центнер çитмест. Анчах та çак колхозсен руководителĕсем вăрлăхсене тасатас тата çитменнине хатĕрлес пирки пикенсе ĕçлемеççĕ-ха.

Тĕрĕслӳре палăртнă çитменлĕхсене халех пĕтермелле

ЕЛЧĔК. Пĕр-пĕрипе ăмăртакан колхозсем çуракине тухма хатĕррине тĕрĕслесси пĕтĕм районĕпех пырать. Нумай пулмасть Крупская ячĕпе тăракан колхозăн представителĕсем «Хунав» колхоз çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе ирттернĕ. Тĕрĕслӳре лашасене, вăрлăхсене, плугсемпе ялхуçалăх машинисене, ут таврашĕсем, акара кирлĕ михĕсем, урапасем çителĕклине тата вĕсем юсавлине пăхса тухнă. Крупская колхозăн представителĕсем «Хунав» колхоз çуракина пур енчен те хатĕрленсе çитнине палăртнă.

Патреккел ялсоветне кĕрекен «Осоавиахим», «Красные Тимяши» тата Тимирязев ячĕпе тăракан колхозсем пĕр-пĕрипе ăмăртаççĕ. Кунта та тĕрĕслӳ пулса иртнĕ. Тĕрĕслеве колхозниксене анлăн явăçтарнă. Сăмахран, «Осоавиахим» колхоза тĕрĕслес ĕçе 25 çын ытла хутшăннă. Тĕрĕсленĕ хыççăн «Красные Тимяши» колхоз (председателĕ Никифоров юлташ) çуракине пачах япăх хатĕрленни палăрнă. Колхозăн 154 центнер вăрлăхлăх тырă çитмест. Лашасем вăйсăр, вĕсене начар пăхаççĕ. Тимирязев ячĕпе тăракан колхозăн вăрлăхсем çитеççĕ, плугсене, сӳресене, ут таврашĕсене те çителĕклĕ таран хатĕрленĕ. Уйрăмăнах кунта Г. Пушков ертсе пыракан бригада лайăх хатĕрленет.

Анчах ку колхозăн çитменлĕхĕсем те пур-ха. Урапасем хатĕр мар, лашасем те нумайĕшĕ вăйсăр, çураки вăхăтĕнче лашасем валли фураж çителĕксĕр. Выльăх апачĕ пирки ĕç çакăн пек япăх тăрать пулсан та, кунта ăна тирпейлĕ тыткаламаççĕ. Старши конюх Илутов Александр выльăх апатне йĕркеллĕ тыткалас пирки нимĕн те тумасть. Колхоз улăмне итемренех вăрлаççĕ. Вăрлакансене ответ тыттарас пирки никам та нимĕн те шутламасть. Тимирязев ячĕпе тăракан колхоз уйĕнче кăçал тракторсем ĕçлемелле, вĕсем валли горючи çителĕклĕ кӳрсе илмен.

Патреккел ялсоветне кĕрекен колхозсенчен пĕр «Осоавиахим» колхоз кăна çуракине хатĕрленсе çитнĕ теме пулать, унăн та пĕр центнер клевер тата силос валли акмалли культурăсен вăрлăхĕсем çук.

Ялсовет председателĕ В. М. Скворцов юлташ колхозсене ертсе пырас тĕлĕшпе начар мар ĕçлет, анчах калас пулать, массăллă ăнлантарулла ĕç çителĕклĕ мар-ха. Колхозсенче большевикла йĕркелĕх çук. Хăшпĕр чухне ялхуçалăх уставне пăснине те тĕл пулма пулать. Сăмахран, «Осоавиахим» колхозра 1940 çултанпа йĕркеллĕ ревизи туман е çиелтен тунипех ирттерсе янă, иртнĕ çул ревизи комиссийĕ ревизи тунăшăн ĕç кунĕ илнĕ пулсан, ревизи итогĕсем çинчен колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-явман. Тимирязев ячĕпе тăракан колхозра çак вăхăта çитсе те производствăллă плана тата çулталăклăх отчета туса пĕтермен, ревизи туман. Колхозра çитменлĕхсем нумай, вăл çитменлĕхсене çуракине тухиччен пĕтермелле, çак ĕçе колхозниксен анлă массине явăçтармалла.

В. АНЧЕЛ.

* * *

ОКТЯБРЬСКОЕ. Наратчакки ялсоветĕнчи «Красное Сормово», «Опыт», «Молния», «Культура» колхозсенче çураки валли вăрлăхсем çителĕклĕ. Вĕсен шăтаслăхĕ авань. Хире 8.000 лав тислĕк кăларнă. Ялхуçалăх инвентарĕсене пурне те юсаса уйрăм сарайсене вырнаçтарса лартнă.

Халĕ çак колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухрĕç. «Культура» колхозăн ут таврашĕсемпе турта-пăявсем, «Молния» колхозăн сĕрмелли япаласем çитменни палăрчĕ. Вĕсем çав çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме пулчĕç. Тата 4 колхозĕ те лашасене пăхас ĕçе лайăхлатма, лашасене çураки валли самăртма пулчĕç. Вăйлă тырпулшăн кĕрешнĕ çĕрте агротехникăна пĕлни пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, «Красное Сормово», «Молния», «Культура» колхозсенче агрокружок ĕçлеме пуçларĕ. Çак кунсенчех «Опыт» колхозра та кружок ĕçлеме пуçлать. Кружоксене агротехник М. Рыбкина юлташ ертсе пырать, унта 100 колхозник ытла вĕренме çӳрет.

И. АНДРЕЕВ.

„Кам иртерех акать—вăйлă тухăçлă тырă пухать"

ЙĔПРЕÇ. «Тымар» колхоз иртнĕ çул кашни гектартан вăтам шутпа 13 центнер тĕштырă пухса илчĕ. Паллах, вăрçă вăхăтĕнче çакăн пек пысăк тухăçлă тырпул туса илни вăл колхоз членĕсем хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр ĕçленипе кăна пулма пултарнă.

Чăваш республикине иртнĕ çул вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш премие памалла туни çинчен пĕлсен колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ тата та ӳсрĕ.

Фронтовик арăмĕ В. Петрова юлташ пухура çапла каларĕ: манăн упăшка фронтра нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç кĕрешет, эпĕ кунта, колхоз хирĕнче, фронта пулăшас шухăшпа ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме пулатăп. Иртнĕ çул эпĕ 200 ĕçкунĕ тунăччĕ, кăçал 300 ĕçкунĕнчен кая мар тума сăмах паратăп. Упăшка ман ака çинче плугпа ĕçлетчĕ, кăçал эпĕ унăн вырăнне тăрса ĕçлеме шутлатăп,—терĕ Петрова юлташ.

Ватă колхозник Г. Харитонов юлташ çапла каларĕ: пирĕн çĕр начар мар, ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туни кирлĕ. Ака вăхăтĕнче кашни колхозник çакна асра тытмалла: кам иртерех акать—вăл вăйлă тухăçлă тырă пухать. Çураки ĕçне кĕске срокра ирттерме пулăшас тесе, çуракинче пĕтĕм вăя хурса ĕçлес пулать.

П. КУРАКОВ.

Ют çĕршывсенче

Германири çар объекчĕсене союзниксен 5 пин самолечĕ тапăннă

БЕРЛИНПА КИЛЬ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

ЛОНДОН, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви палартса пĕлтернĕ тăрăх, ку вăхăтра Германи çине кунĕн-çĕрĕн пĕр чарăнмасăр бомбăсем пăрахаççĕ. Европа çийĕнче пулса пыракан сывлăшри çапăçăва пĕр хăрăсах темиçе пин самолет хутшăнса тăрать. Тин анчах американецсен 2.000 бомбардировщикĕпе истребителĕ Берлина тата нимĕçсен ытти районĕсене тапăнма таврăннă, çавăнтах акăлчансем 1.000 бомбардировщикĕ Франкфурта тапăнма тухса кайрĕ.

Юлашки 36 сехет хушшинче Германири объектсене тапăнса, пĕтĕмпе шутласан, союзниксен авиацийĕн 5.000 самолечĕ вĕçсе кайнă.

Официально пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Америкăн йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Швейнфуртри тата Франкфуртри промышленность объекчĕсене тапăннă. Бомбардировщиксен ытти соединенийĕсем нимĕçсен Францири аэродромĕсене тапăннă. Тăшман истребителĕсем вăйлăх хирĕç тăраймаы.

Германие мартăн 25-мĕшĕ ыран тĕнĕ чух тапăнма кайнă чухне акăлчансен 1000 бомбардировщикĕ ытла вĕçсе кайнă. Çав тапăнура пуринчен ытла Берлина атакăланă, Берлинри промышленноçлă районсем çине 2.500 тонна бомба пăрахнă. Хулара вăйлă пушарсем тухнă. Ытти соединенисем Киль хулинчи тата Хĕвеланăç Германири объектсем çине бомбăсем тăкнă.

Çав операцирен хăйсен базисене 73 бомбардировщик таврăнман.

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Америка çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Америка самолечĕсен пысăк соединенийĕсем мартăн 26-мĕшĕнче На-де-Кале районĕнчи тата Шербурти çар сооруженийĕсене атакăланă. Тапăну лăпкă çанталăкра лайăх курăннă чухне пулса иртнĕ.

Самолетсен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Эймейденри порт сооруженийĕсене (Голланди) атакăланă.

ГЕРМАНИ ХУЛИСЕНЕ АВИАЦИ ТАПĂННА ЧУХНЕ НИМĔÇСЕМ ХĂРАСА ӲКЕÇÇĔ

ЖЕНЕВА, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарин «Националь цейтунг» хаçачĕ çапла çырать: Германин авиаци тапăнакан хулисенче халăх пит хытă хăраса пурăнать. Сывлăшран тапăнасси çинчен пĕлтерекен сигнал сасси илтĕнсенех, халăх виçерен тухса хыпăнса ӳкет, нисталла мар тастала ĕçсем тума тытăнать, пашикăна кĕрсе ӳкнĕннех туйăнать.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Кассино хулинче тата ун сывăхĕнчи çӳллĕ вырăнсем çинче союзниксен çарĕсем тăшманпа штык вĕççĕн тăрса хаяррăн çапăçаççĕ. Союзниксен çарĕсем вăрахăн анчах та çине тăрсах малалла куçса пыраççĕ, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре тăкаççĕ. Американецсен 5-мĕш армийĕн тĕп фронтĕн ытти участокĕсенче тата Анцио районĕнчи плацдармра патрульсем кĕрешнĕ. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн фронтĕнче патрульсен хаяр тытăçăвĕсем пула-пула иртнĕ.

Мартăн 21-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ тăшманăн Италири объекчĕсене тапăннă. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕсри сывлăш-çар вăйĕсем 800 вĕçев тунă.

ЛОНДОН, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Кассино хулинче çапăçсах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Тăшман союзниксен хула тулашĕнчи позицийĕсенчен пĕрре хирĕç контратака пуçласа янă. Союзниксен чаçĕсем çав контратакăна сирсе янă. Тыткăна илнисем пур.

Мартăн 22-мĕшĕнче союзниксен самолечĕсем тăшманăн Вăтам Италири тата Хĕвеланăç Германири çар объекчĕсене тапăннă, çавăн пекех тата тăшманăн Югославири сыранĕсем сывăхĕнчи шуллă суднисене тапăннă.

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Кассино хулинче çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Ытти фронтсенче патрульсем тытăça-тытăça илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕн самолечĕсем 800 вĕçеве яхăн тунă.

США-н ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЕ ЯНА ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕН ЙЫШĔ

ЛОНДОН, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, пичет представителĕсене Рузвельт çапла пĕлтернĕ: Пĕрлешӳллĕ Штатсен июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне ют çĕршывсенче 5 миллионла çар пулать.

ФРАНЦУЗ ХĔРАРĂМĔСЕНЕ СУЙЛАВ ПРАВИ ПАНИ

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: мартăн 22-мĕшĕнче французсен Консультаци Ассамблейи пĕр саслă пулса француз хĕрарăмĕсене суйлав прави памалла тунă.

„Хĕрлĕ Çар нимĕçсене çĕнĕрен калама çук пысăк поражени тӳстерчĕ"

АМЕРИКА ХАÇАЧĔСЕМ СОВЕТ ÇАРĔСЕН НАСТУПЛЕНИЙĔ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар Украинăра çĕнтерӳллĕ наступлени туса пыни çинчен калакан хыпарсем Америка хаçачĕсенче çаплах тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ. Хĕрлĕ Çар Днестр урлă каçни çинчен калакан телеграммăсене питĕ пысăк саспаллисемпе пичетлесе кăларнă. Днестр урлă каçни çинчен «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат çапла çырать: çакă вăл Германи позицийĕсене питĕ вăйлă аркатнине пĕлтерет. Хĕрлĕ Çар нимĕçсене çĕнĕрен калама çук пысăк поражени тӳстерчĕ. Çак поражени вăрçă пуçланнăранпа пулнă чи пысăк пораженисенчен пĕри пулса тăрать. Вăрçă Германи ĕçĕ пĕтĕмпех путланса ларнипе вĕçленет. Шыв-шур вăхăтĕнче çавăн пек хăвăрт та çав тери анлă фронтпа наступлени туса пынинчен питĕ тĕлĕнмелле.

Вăрçă çинчен çыракан çынсем нумаях та пулмасть нимĕçсем Буг шывĕ патне чакма пултарни çинчен калатчĕç, тет хаçат, халĕ ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар сарлака фронтра Буг шывĕ урлă каçса кайрĕ те, Германин фронт линийĕ урлă каçса, вăйлă хум пек малалла вăркăнчĕ.

«Вырăссем халĕ ак мĕн пирки çĕнтерсе пыраççĕ,—тесе çырать юлашкинчен хаçат: — тăшмана çĕнтермешкĕн вĕсем темле жертвăсем тума та, темĕн чухлĕ вăй хума та хатĕр. Вăрçăра çавăн пек жертвăсем тума хатĕр пулмасăр тăшмана çĕнтерме çук».

„НАСТУПЛЕНИ ТĂВАКАН ХĔРЛĔ ÇАРĂН ХĂВАЧĔПЕ ХАСТАРЛĂХĔ"

АНГЛИРЕ ХĔРЛĔ ÇАРĂН ÇИТĔНĔВĔСЕМ ÇИНЧЕН ÇЫРНИ

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: юлашки эрнесенче Украинăра совет стратегийĕ тăвакан çĕнĕ çитĕнӳсем çинчен кашни кунах çĕнĕ хыпарсем килсе тăчĕç. Наступлени тăвакан Хĕрлĕ Çарăн хăвачĕпе хастарлăхĕ çапăçăвăн чи вăйлă тапхăрĕ сывăхарса килнине кăтартаççĕ.

Рузвельт тухса калани

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 24-мĕшĕнче Рузвельт президент пресс-конференцире заявлени тунă. Унта çапла каланă:

«Пĕрлешӳллĕ нацисем тиранипе агресси пулма пултарайман тĕнче туса хурассишĕн, ирĕклĕхпе пĕртанлăх тата тĕрĕслĕх пуçпулса тăракан тĕнче тăвассишĕн, пур çынсем те (вĕсем мĕнле раса иккенне, вĕсен ӳчĕн тĕсне тата вĕсем мĕнле тĕне ĕненнине пăхмасăрах) мирлĕ пурăнма пултаракан тата хăйсен чысĕпе тивĕçне сыхласа усрама пултаракан тĕнче туса хурассишĕн кĕрешеççĕ.

Нацистсем тата японецсем Европăри нумай çĕршывсенче тата Азин уйрăм пайĕсенче мирлĕ халăхсене — арçынсемпе хĕрарăмсене тата ачасене—пĕр чăрмавсăрах, тăтăшах вĕлереççĕ, йывăр асап кăтартаççĕ. Пусмăрçăсем пăхăнтарнă районсенче ним айăпсăр поляксем, чехсем, норвежецсем, голландецсем, датчансем, французсем, грексем, вырăссем, китаецсем, филиппинецсем тата ытти нумай халăхсем сивĕпе, выçăпа вилеççĕ е вĕсене асап кăтартса вĕлере-вĕлере пĕтереççĕ».

Рузвельт малалла çапла каланă: «Нацистсем мирлĕ вăхăтра историри чи тискер ĕçсенчен пĕрне—Европăри еврейсене массăллăн вĕлерсе пĕтерессине—пуçласа янă, вăрçă вăхăтĕнче çав ĕçе çĕр хут та вăйлатса янă. Çав ĕçе вĕсем халь те туса пыраççĕ», тенĕ.

«Эпир çав тискер ĕçсене хутшăннă пĕр çын та ответ тытасран хăтăлма ан пултартăр тесе тăрăшатпăр. Хальхи вăхăтра çавăн çинчен пĕлтерни вăхăтлă пулса тăрать,—тенĕ заявленире. — Пĕрлешӳллĕ нацисем айăплă çынсене шыраса тупса ответ тыттармалли çинчен уçăмлăнах пĕлтерчĕç. Çавăн пек асăрхаттарни лидерсене кăна мар, вĕсен сотрудникĕсемпе вĕсене пăхăнса тăракансене те — Германири тата Германипе туслă çĕршывсенчисене те тивет. Еврейсене Польшăна вилме ярас ĕçе, норвежецсемпе французсене Германие вилме ярас ĕçе хутшăнакансем те мирлĕ халăхсене вĕлерекенсем пекех ответлă пулса тăраççĕ.

Çавăн пек ĕçсене хутшăнакансене пурне те айăпламалла. Этемлĕхе хирĕç тăвакан çав преступленисене Гитлер Германи халăхĕн ячĕпе тăвать. Эпĕ çакна ыйтатăп: нацистсем пуç пулса тăракан çĕрте пурнакан кашни нимĕç тата кашни çын вăл çав преступленилле ĕçсемпе килĕшменнине пĕтĕм тĕнче умĕнче хăйĕн ĕçĕсемпе кăтартса патăр. Вăл çав асап курақансене пытарса усратăр, вĕсене чикĕ урлă тарса кайма пулăштăр, вĕсене нацистла пуçкасакансенчен хăтарма пĕтĕм вăйĕпе тăрăштăр. Эпĕ вĕсенчен тата айăплисене сăнаса пыма, çитес вăхăтра вĕсене тăрă шыв çине кăларма кирлĕ материалсене пухма ыйтатăп.

Çакăнпа пĕрлех Пĕрлешӳллĕ штатсем пĕтĕмĕшпех çĕнтеричченех (çĕнтерӳ тăвассине халĕ татса панă ĕнтĕ) халăхсене нацистсен тата японецсен тискерлĕхĕнчен хăтарассишĕн тимлĕн тăрăшаççĕ. Америка правительстви вăрçă операцийĕсем май панă таранах çынсене нацистсемпе японецсен пусмăрĕнчен тарса хăтăлма пулăшĕ.

Эпир Европăри тата Азири ирĕклĕ халăхсене çав çынсене вăхăтлăха пурăнма май пама чĕнетпĕр. Эпир вĕсен çĕрĕ çинчен тиранине хăваласа кăлариччен, вĕсем каялла таврăниччен вĕсене пулăшмалли майсене тупăпăр. Тĕрĕслĕхпе этемлĕхшĕн тăрăшса, ирĕклĕхе юратакан пĕтĕм халăхсен çак тĕрĕслĕхлĕ ĕçе хутшăнмалла».

Рузвельт президент малалла çапла каланă: Американ шалти политики мĕнле тесе ыйтакансен çак заявленин пĕррремĕш татăкĕ çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла тенĕ. Çавăн пекех Рузвельт Америкăн шалти политикине лайăх палăртакан сăмахсем çине — «тискер ĕçсене хутшăннă пĕр çын та ответ тытассинчен хăтăлаймасть» тенĕ сăмахсем çине кăтартса панă.

Англин официальнăй çыннисем Рузвельт заявленийĕ çинчен

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин официальнăй çыннисем çапла каланă: Германи тата унăн союзникĕсем хăйсен территорийĕсенче çынсене мăшкăлне те çаплах асаплантарас пулсан, вĕсене çавăншăн çирĕп ответ тыттарасси çинчен Рузвельт вĕсене асăрхаттарса каланине Англи правительстви пĕтĕмпех килĕшет.

Черчилль радиопа тухса калани

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Паян каçхине Великобритани премьер-министрĕ Уинстон Черчилль радиопа тухса каланă. Вăл вăрçă ĕçĕсем мĕнле пынине кăтартса панă тата Англин шалти ыйтăвĕсем пирки каланă. Черчилль 45 минут хушши каланă.

ГЕРМАНИ ÇАРĔСЕМ АЛАНД УТРАВĔСЕМ ÇИНЕ АННĂ

ЛОНДОН, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Илнĕ шанчăклă сведенисем тăрăх, Лондонри радио çапла пĕлтерет: Германи çарĕсем ĕнтĕ темиçе кун Финлянди аллинче тăракан Аланд утравĕсем çине анаççĕ. Ку таранччен Финлянди çав утрав çине нихăш ют çĕршыв çарне те кĕртмен. Ку утравсем çинчен Балтика тинĕсĕн чылаях пысăк пайне тĕрĕслесе тăма лайăх.

ГЕРМАНИ ÇАРĔСЕМ СЛОВАКИЕ КĔРСЕ КАЙНĂ

ЛОНДОН, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Каирти радио илнĕ хыпарсем тăрăх, Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Германи çарĕсене Венăран Словакие яраççĕ, вĕсем унта мĕн пур кирлĕ пысăк пунктсене пурне те йышăнмалла.

АМЕРИКĂН СУТУ-ИЛӲ ПАЛАТИН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ СОВЕТ СОЮЗНЕ КИЛЕТ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Американ суту-илӳ палатин председателĕ Джонстон Совет Союзне килме кайма чĕннине йышăннă. Вăл Совет Союзне май уйăхĕн 12-мĕшĕнче тухса каясшăн.

ВЕНГРИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Свенскадагбладет» хаçат çапла пĕлтерет: кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, пĕтĕм Венгрире оккупаци властĕсене хирĕç тăма хатĕрленеççĕ.

Венгерсен Берн хулинчи миссийĕ Будапештри правительствăна пăхăнмасть, унпа çыхăну тытма пăрахнă. Венгрири çĕнĕ правительство законлă правительство мар, тесе пĕлтернĕ çав мисси.

СТОКГОЛЬМ, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонбладет» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Берн хулинче çакăн пек хыпар сарăлнă: Венгрире Хортие вырăнтан кăларнă, ун вырăнне государство правителĕ пулма Имреди лартнă».

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ВЕНГРИ РАБОЧИЙĔСЕНЕ ГЕРМАНИЕ ЯМА МОБИЛИЗАЦИ ТУСА ИРТТЕРМЕ ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Стамбулри венгер ушкăнĕсенче илтнĕ хыпарсем тăрăх, çапла пĕлтерет: Венгрин çĕнĕ правительстви Венгри промышленноçĕнчи 150.000 рабочие Германие яма мобилизаци туса ирттерме хатĕрленет.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЗОХЕЛЬ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 02033

Типография №1. Управлении полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59X42 п. л. Тираж 14...